27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАРТ
4
ВЫРСАРНИКУН
42(6793) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабĕн начальникне Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла талăнса пырса, паян, мартăн 3-мĕшĕнче, РУММЕЛЬСБУРГ хулипе ПОЛЛНОВ хулине—çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен Померанири оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—çапăçса туртса илнĕ.

РУММЕЛЬСБУРГ хулипе ПОЛЛНОВ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ТРУБНИКОВ генерал-полковникăн, ПОПОВ генерал-полковникăн, ЛЯПИН генерал-лейтенантăн, ДРАТВИН генерал-лейтенантăн, СКОРОБОГАТКИН генерал-майорăн, ХУДАЛОВ генерал-майорăн, ГРЕБЕНКИН полковникăн, ХРАМЦОВ полковникăн, БАЦИЕНКО подполковникăн, РОГОВ полковникăн, МЕШКОВ полковникăн, ГУСЕВ генерал-майорăн, БЕЛОСКУРСКИЙ генерал-майорăн, МУРАТОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорĕн БЕЗРУКАН, артиллери генерал-майорĕн ЛИХАЧЕВАН, КУЛИЧУК полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, НЕСВЕТАЙЛО полковникăн, ГЕРАСИМЕНКО полковникăн, КИРГЕТОВ полковникăн, БОЙБУЗЕНКО майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ЧЕРНЯВСКИН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПАНФИЛОВАН, УРВАНОВ полковникăн, ЕГОРОВ подполковникăн, КУЦ подполковникăн, РЯЗАНЦЕВ подполковникăн, ОРЕЛ подполковникăн, НЕМКОВИЧ подполковникăн, ХАРИТОНОВ полковникăн, ПОТАПОВ майорăн, БАЛЫКОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНАН, авиаци генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БАЙДУКОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ОСИПЕНКАН, ГРИШЕНКО полковникăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн, РЫБАКОВ полковникăн, КАЛУГИН полковникăн, СМОЛОВИК полковникăн, ВУСС полковникăн летчикĕсем; КЛЕМЕНТЬЕВ полковникăн, ПОЛОВНЕВ инженер-полковникăн саперĕсем; СЫЧЕВ полковникăн, ГРАДЕЦКИЙ майорăн, ЛЕБЕДЕВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, РУММЕЛЬСБУРГ хулипе ПОЛЛНОВ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 3-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр пăрăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, РУММЕЛЬСБУРГ хулипе ПОЛЛНОВ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ **И. СТАЛИН.**

1945 çулхи мартăн 3-мĕшĕ. № 287.

Ӳкерчĕк çинче: Красноармейски районри «Жнейка» колхоз членĕ М. Н. Николаев юлташ.

М. Н. Николаев 72 çулта. Хăй ваталăхне пăхмасăрах, вăл иртнĕ çул колхозра пахалăх комиссинче ĕçленĕ, 300 ĕçкунĕ ытла тунă. Халĕ вăл çуракине хатĕрленес енĕпе пикенсе ĕçлет, ут таврашĕсене юсать, вĕренпăявсем явса хатĕрлет.

Сводкăшăн мар, тырă тухăçлăхĕшĕн кĕрешмелле

КУКЕÇ. Районри колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине кăтартакан сводка тăрăх Пăçпак ял Советне кĕрекен колхозсем чи малти ретре пыни курăнать.

Унта—4 колхоз. Ял Советне кĕрекен колхозсен 100-шер тонна тислĕк, вуншар центнер кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 100-шер тонна торф хатĕрлемелле. Колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлеме паянхи куна çитсе те кирлĕ пек тытăнман-ха. Хире тислĕк кăларас ĕçе конюхсене кăна хушнă. Вĕсем кашни кун 2—3-шер лав çеç турттараççĕ. Çавăн пекех кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне те ача пăчасем çеç пуçтаркалаççĕ. Торф кăларма пачах пуçăнман.

Çак вăхăтрах ял Советне кĕрекен колхозсем, вырăнти удобренисем пухса хатĕрлемелли плана 60 процент ытла пурнăçларăмăр тесе, хăйсене хăйсем лăплантараççĕ.

Çынна улталама хăтланса, вĕсем хăйсем улталанса юлаççĕ. Иртнĕ çулта «Рунга» колхоз, çуя сводкăсем тăратса, хăйĕн çĕрне пачах та çемçетмен. Çавна пула иртнĕ çулта гектартан вăтам шутпа 3—4-шар центнер кăна тĕштырă пухса илнĕ.

Иртнĕ çулта çĕре çемçетмен пирки сахал тырпул туса илнĕ колхозсем районра чылаях пулчĕç. Акă, Шурккари «Культура» колхоз (председателĕ Петров юлташ) планпа пăхнă 12,7 центнер вырăнне 5 центнер, Шемшер ял Советĕнчи «Красная Звезда» колхоз 12,5 центнер вырăнне 9,57 центнер, «Актив» колхоз 12 центнер вырăнне 5 центнер çеç тĕштырă туса илнĕ.

Çав колхозсем кăçал та çуракине кирлĕ пек хатĕрленмеççĕ.

Колхозсен сводкăшăн мар, тырă тухăçлăхĕшĕн кĕрешмелле.

Г. ПЕТРОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

„Эпир хамăр ялава никама та памастпăр!“

Канашран тухсан Аслă Пăла Тимешне çитиех лавăç Баринов хăйĕн колхозĕпе мухтанса пычĕ. Ку ĕнтĕ мухтанчăк çын пулнă, тесе шутлама пултараççĕ вулакансем. Çапла шутлани тĕрĕс пулман пулĕччĕ, мĕншĕн тесен Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра Баринов çеç мар, кашни колхозникпа колхозница хăйсен колхозĕпе мухтанаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсен хăйсен ĕçĕпе мухтанма çителĕклĕ таранах сăлтавсем пур.

Хуларан тухса Тимеше çитме утмăл километр пулать. Çак çулпа пырса, эсĕ темиçе ял витĕр тухатăн, вăл шутрах Тутар республикине кĕрекен ялсем те тĕл пулаççĕ.

Кашни яла кĕмессерен, Баринов çав ялти колхоз мĕнле ĕçлени çинчен каласа парать. «Начартарах ĕçлеççĕ-ха», тесе вĕçлет вăл час-часах хăйĕн сăмахне.

Акă пирĕн Çĕнĕ Пăва колхозĕ витĕр тухмалла пулчĕ.

— Ку ялтан пирĕн колхоза çитме чылай инçе, — тесе пуçларĕ лавăç Баринов.—Эпир пĕлтĕр çак колхозăн 60 гектар çĕрне акса тырă туса илтĕмĕр. Хăйсен çĕрне пĕтĕмпех акма вĕсем вăй çитерейменпулнă. Эпир акнă çĕр ак çакăнтарахраччĕ пулас, акă кунта вĕсем хăйсем акнăччĕ. Вĕсем хăйсем акнă çĕр эпир акнинчен начар пулма тивĕç мар. Апла пулин те, пирĕн гектартан вунултă центнер ытла тухрĕ, вĕсем хăйсем пурĕ те тăватă центнер ытларах кăна пухса илчĕç. Тĕлĕнчĕç вара кунти колхозниксем. Анчах тĕлĕнмелли мĕнех пултăр-ха унта? Вĕсем кая юлса акрĕç, кая юлса пухса кĕртрĕç. Эпир вăхăтра акнă, вăхăтра пухса кĕртнĕ. Эпир вĕсен хиренче хăш вăхăтра ĕçлесе илнине кунти колхоз членĕсем сиссе те юлаймарĕç. «Эсир пирĕн хирте ĕçлеме хăçан пыратăр вара?» тесе ыйтаççĕ вĕсем пирĕнтен, а эпир тахçанах ĕнтĕ вĕсен хиренче ĕçлесе кайнă... Çакăн хыççăн вĕсем начар тырă илнинчен тĕлĕнмелли мĕнех пултăр?..

Çапла каласа кăтартнă чух Бариновăн чунĕ савăнчĕ пулас—вăл çемçен кулса илчĕ.

Пире хирĕç нумай лавсем тĕл пулаççĕ. Баринов вĕсемпе калаçать, «ăçтисем пулатăр, ăçта каятăр» тесе ыйта-ыйта пĕлет. Вăл тутарла та лайăх калаçать. Акă пире Тутар республикинчи колхозницăсем тĕл пулчĕç.

— Кăя парасăс?—ыйтаççĕ лешсем.

— Тимешке... Ворошилов колхознă, — ответлет Баринов.

— Бĕлем, бĕлем.—тет пĕр хĕрарăмĕ.

Çакăн хыççăн тепĕр çĕнĕ ялпа палăрать: Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн чапĕ хамăр республикăра çеç мар, тăванла Тутар республикинче те саралнă иккен.

Анчах мĕнпе чапа тухнă-ха вăл колхоз? Кун çинчен пирĕн хаçатсем сахал мар çырнă ĕнтĕ. Çавăнпа кунта кĕскен каласа парсан та çителĕклĕ. Иртнĕ темиçе çул хушшинче Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене республикăра чи малтан вĕçлесе пычĕ. Пĕлтĕр те вĕсем уйхир ĕçĕсене кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса иртерчĕç. Кашни гектартан колхоз пĕлтĕр вăтам шутпа 17 центнер тĕштырă туса илчĕ. Государствăна парса татнă хыççăн, Хĕрлĕ Çар фондне планран иртерсе пиншер пăт тырă панă хыççăн тата вăрлăх фончĕсемпе фураж фончĕсене хывса çитернĕ хыççăн, колхоз ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограмм тĕштырă, 1 тенкĕ те 70 пус укçа тата çĕрулми пĕр килограмм ытла валеçсе панă. Колхозăн лашасем çителĕклĕ, ĕне, сурăх, сысна фермисем пур. Вĕсенче ăратлă выльăхсем ĕрчеççĕ. Витесем таса, çутă, ăшă. Фермăсенче кăтартуллă йĕркелĕх.

Кунта кашни колхозник хăйĕн ĕçне типпейлĕ туса пырать, кашни колхозник хăйĕн колхозне мала кăларма тăрăшать. Чăнах та вара вĕсем пĕлтĕр республикăра мала тухрĕç. Чăваш АССР Совнаркомĕ вĕсене виçĕмĕш хут хăйĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла турĕ.

Çак кунсенче колхоза Совнаркомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă ятпа колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ.

— Сирĕн колхоз пек малта пыракан колхозсемпе пирĕн пĕтĕм республика мухтанать,—терĕ Чăваш АССР Совнаркомĕн представителĕ, Хĕрлĕ Ялава парса.—Анчах çакă вăл сирĕн çине пысăк ответлăх хурать. Пирĕн республикăра лайăх ĕçлекен колхозсем сахал мар. Эсир хăвăр ĕçе кăшт вайсăрлатсанах, вĕсем сирĕнтен çак ялава туртса илме пултараççĕ. Çак хисеплĕ ялава килес çул та хăвăр алăрах хăварас тесен, сирĕн кăçал пĕлтĕрхинчен лайăхрах ĕçлемелле пулать.

Колхоз председателĕн заместителĕ Лесников юлташ, Хĕрлĕ Ялава йышăнса, колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче тунă çитĕнӳсем çинчен кĕскен каласа пачĕ, кăçалхи уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса иртерме пулса колхозниксен ячĕпе сăмах пачĕ.

Пухура Елчĕк райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Марков юлташсем тата колхозниксемпе колхозницăсем тухса каларĕç. Вĕсем колхозăн çитĕнĕвĕсемпе пĕрлех, çитменлĕхсене те палăртрĕç. Сăмахран, колхозăн чăх-чĕп ферми çук, хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç халĕ те юлса пырать, садсем лартса ӳстерме тытăнман.

Пуху çак çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерме палăртрĕ, кăçал кашни гектартан 20 центнер тĕштырă туса илессишĕн кĕрешме сăмах пачĕ, çавăн чухлĕ тырпул туса илессишĕн кĕрешме районри колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе çыру çырма йышăнчĕ.

* * *

Пуху хыççăн çакăн пек калаçу пулса иртрĕ:

— Кăçалах илеймесен те, 1946 çулта эпир çак Хĕрлĕ Ялава сирĕнтен обязательно туртса илетпĕр,—терĕ кӳршĕри «КИМ» колхоз председателĕ Измин юлташ.

— Пастай-ха, мĕншĕн вара эсĕ обязательно пирĕн колхозрине илесшĕн? Урăх районран тепĕр ялавне илсе кил... Эпир хамăрăннне никама та памастпăр,—терĕ ăна хирĕç колхозăн ветсанитарĕ, примерлă колхозник Скрипкин юлташ.

Чăнах та, çирĕппĕнех шанса тăма пулать: Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз Хĕрлĕ Ялава хăйĕн аллинчен вĕçертмĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Ӳкерчĕк çинче: Красноармейски МТС-ĕнчи чи лайăх тракторист И. Т. Титов юлташ. Иртнĕ çул вăл тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 155 процент ытла тултарнă. Кăçал хăйĕн тракторне тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене пур енчен те хатĕрлесе çитернĕ. И. Т. Титов юлташа лайăх ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тракторсене мĕнле юсанине тĕрĕслеççĕ

Чкаловски МТС кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, тракторсене юсас тĕлĕшпе нумай лайăхрах ĕçлет. 1944 çулхи тăваттăмĕш кварталти, çавăн пекех кăçалхи январь тата февраль уйăхĕсенчи планпа пăхнă тракторсене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ. Паянхи кун тĕлне МТС-ри 44 трактортан 37-ĕшне юсаса лартнă. Çак тракторсене государство комиссийĕ те лайăх юсанă тесе йышăннă. Халиуллин, Краснов, Кураков, Шитова, Северов, Коновалов, Быков юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем хăйсен тракторĕсене пĕтĕмĕшпех юсаса çитернĕ. Тракторсене мĕнле юсанине тĕрĕслеме Комсомольски МТС-ран пынă механик-контролер Куймако юлташ тракторсене пăхсан, пĕчĕк çитменлĕхсемсĕр пуçне, нимех те тупайман. Çав çитменлĕхсене трактористсем çийĕнчех пĕтернĕ.

МТС-ра 1943 çулта юрăхсăра тухнă тесе ĕçлемен 4 трактор пулнă. Трактористсемпе трактористкăсем çав тракторсене юсаса ĕçлекен тума обязательство илнĕ. Халĕ вĕсене юсас ĕç ăнăçлă пырать. Тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене те графикпа пăхнă тăрăх тĕплĕн юсаса пыраççĕ.

Çак кунсенче МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа панă приказне сӳтсе-явнă. МТС коллективĕ, Сталин юлташăн приказне ĕçпе ответлес тесе, тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене мартăн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса çитерме обязательство илнĕ. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн халĕ кашни трактористпа трактористка ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

(Хамăр корр.).

Фронтовиксен ачисене пулăшаççĕ

Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем фронтовиксен ачисене пулăшас тĕлĕшпе февраль уйăхенче икĕ воскресник тата нумай çĕрте вечерсемпе концертсем туса ирттернĕ. Çав воскресниксенче пухнă япаласемпе укçа-тенкĕ пĕтĕмпех фронтовиксен ачисене пулăшмалли фонда панă.

Красноармейски районри комсомолецсемпе çамрăксем икĕ воскресникре 5785 тенкĕ укçа, 62 килограмм çăм тата тĕрлĕ çимĕçсемпе кĕпе-тумтирсем нумай пухнă. Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă кун нумай фронтовиксен ачисене парнесем панă. Вăл парнесем хушшинче 40 килограмм çу, 20 килограмм премĕк, 286 килограмм какай, 1831 килограмм çăнăх, 50 мăшăр çăматă пулнă.

Сĕнтĕр районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем икĕ воскресникре 4486 тенкĕ укçа, 10 килограмм çăнăх, 340 килограмм тĕштырă, 19 мăшăр çăматă тата ытти япаласем те нумай пухнă.

Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрри районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем те ку ĕçре аван ĕçлерĕç. Вĕсем пурĕ 13.500 тенкĕ укçа, 1176 килограмм çăнăх, 200 килограмм çĕрулми, 48 килограмм какай тата çиелтен тăхăнмалли тумтирсем 28 штук, алшиш-чăлхасем 19 мăшăр, çăматăсем 9 мăшăр пухса панă.

Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн паттăр çапăçакан фронтовиксен ачисем лайăх пурăнччăр, вĕренччĕр тесе, комсомол организацийĕсем куллен тăрăшаççĕ. Ку ĕçе малашне тата лайăхрах туса пыни кирлĕ.

И. ДИМИТРИЕВА,
ВЛКСМ Обкомĕн инструкторĕ.

Районăн вутă турттарас енĕпе вăйлăнрах ĕçлемелле

ИШЛЕЙ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри колхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай вăрманпромхозĕнче ĕçлеççĕ. План тăрăх районăн кĕркуннехипе хĕллехи вăхăтра 6.000 кубометр вутă хатĕрлесе турттармалла. Фронтовой уйăхлăхра тăрăшса ĕçлесе, район мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 7.500 кубометр хатĕрленĕ, 5.066 кубометр турттарнă. Вутă хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмах «МОПР», «Правда» колхозсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен заданийĕсене февралĕн 23-мĕшĕччен тултарчĕç.

Районри колхозсен тепĕр ушкăнĕ Атăл леш енчи механизациленĕ вăрман пунктĕнче ĕçлет. Кунта пурĕ 5.388 кубометр хатĕрленĕ, 4.032 кубометр турттарнă. Атăл леш енчи механизациленĕ вăрманпунктĕнче ĕçлекен колхозсенчен «Коминтерн», «1-ое мая» колхозсем малта пыраççĕ. Вĕсем вутă хатĕрлемелли хăйсен заданийĕсене чылай иртерсе тултарнă. Сăмахран, «Коминтерн» колхоз 600 кубометр вырăнне 863 кубометр хатĕрленĕ.

Анчах та районри «Красное Знамя», «Акара», «Труд», «Клевер», «Ыраш» тата «Вускасси» колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче юлса пыраççĕ. План тăрăх ку колхозсен пурĕ 1000 кубометр турттармалла. Ку таранччен вĕсем пĕр кубометр та турттарман. Асăннă колхоз председателĕсем вăрман хатĕрлевĕ çине çаврăнса та пăхмаççĕ, вутă турттарнă çĕрте ĕçлеме лашасем уйăрса памаççĕ. Район руководителĕсен вăрман хатĕрлевĕнче юлса пыракан колхозсем тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнмалла.

В. ГУСЬКОВ.

Ялти корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Çак кунсенче кунта районри хаçатăн корреспонденчĕсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура малтанах ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ Григорьев юлташ тĕнчери лару-тăру çинчен доклад туса пачĕ. Ун хыççăн канашлу участникĕсем ялти корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсен çуракине хатĕрленес ĕçри задачисем çинчен П. Тихонов юлташăн докладне итлерĕç.

Пренире тухса калакансем «Ленин çулĕпе», «Крестьянин», «Красный Туганаш», «Великан», «Красный маяк» колхозсенче стена хаçачĕсем кăларас тĕлĕшпе партипе комсомол организацийĕсем тăрăшса ĕçлеменнине палăртрĕç. Çав колхозсенче уйăхра икшер номер стена хаçачĕсем, бригадăсенче боевой листоксем тухса тăраççĕ. Çакăнпа пĕрлех чылай колхозсенче стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăмаççĕ, партипе комсомол организацийĕсем çав ĕçе ни телĕксĕр ертсе пыраççĕ.

Юлашкинчен канашлу колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшас тĕлĕшпе ялти корреспондентсен рейдне ирттерме йышăнчĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре малалла талăнса пынă, РОЗЕН, РЕНТЕНГЮТЕР, ШЕНВАЛЬДЕ, ШЕНАУ, МЕРТЕНСДОРФ ялĕсене тата ШЕНАУ чугун çул станцине туртса илнĕ.

ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хули районĕнче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, хулан кăнтăр енчи пайне нимĕçсенчен тасатса пĕтернĕ.

Померанире, НОЙШТЕТТИН хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем малалла наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ГОЛЬДОВК, ДУББЕРТЕХ, КЛИНГБЕК, ПЕРЗАНЦИХ, ГИССОЛЬК, ИУХОВ ятлă пысăк ялсем.

БРЕСЛАУ хулинче хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 1-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 62 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 39 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Нимĕçсен пĕчĕк территорире хĕстерсе лартнă пысăк вăйĕсем хытă хирĕç тăраççĕ. Темĕнле пысăк çухату тӳсет пулин те, тăшман хăйĕн пехота чăçĕсене контратакăна кĕрте-кĕрте ярать. Пехота чăçĕсене танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем пулăшса пыраççĕ. Кун каçиччен пирĕн çарсем тĕрлĕ участоксенче 60 контратака ытла сирсе янă. Тăшман оборонине çĕмĕрсе пырса, совет чăçĕсем нимĕçсен тĕреклетнĕ пункчĕсенчен ирте-ирте каяççĕ те тăшман гарнизонĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Пĕр соединени чăçĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн вăйлă çирĕплетнĕ Шенвальде ялне туртса илнĕ. Пирĕн ытти чăçсем нимĕçсене Шенау ялĕпе чугун çул станцийĕнчен сирпĕтсе кăларнă. Вилнисене кăна шута илсен те, тăшманăн 3.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ. Нимĕçсен 34 танкне, 45 хир туппине, 7 бронетранспортерне тата 200 пулеметне çити пĕтерсе тăкнă. Юлашки икĕ кун хушшинче 800 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Померанире, Нойштеттин хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман хирĕç тăнине сĕнтере-сĕнтере, пĕр соединени чăçĕсем 10 километр малалла кайнă. Кезлин хулинчен 28 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Дуббертех ялне туртса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсемпе кавалеристсем нимĕç пехотин колоннине сăвăрса илсе аркатса тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. 250 нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Бреслау хулинче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Нимĕçсем хулари çуртсене йĕри-тавра хӳтĕлесе тăма майлаштарнă, урамсене кил хушшисенче темиçе пин мина лартса тухнă. Совет саперĕсем, пехотăна малалла кайма çул уçса пырас тесе, минăсене сиенсĕрлетеççĕ. Тăшманăн хирĕç тăмалли узелĕсене сиктере-сиктере яраççĕ. Саперсен ушкăнĕ нимĕçсем çирĕпленсе ларнă пĕр пысăк çурт патне шуса пынă. Вара тарăн шăтăк чавнă та çав çурта сиктерсе янă. Çуртри гитлеровецсем, ишĕлсе аннă çурт айне пулса, вилсе пĕтнĕ. Çапăçса малалла куçса пырса, пирĕн штурмлакан отрядсем темиçе урама нимĕçсенчен тасатнă. 1.200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра 3.000 авиабомба тата боеприпассем нумай. Пирĕн подразделенисене фалькештурм роти тыткăна парăннă. Çав ротăри салтаксем хăйсен командирĕпе пĕрле, алăсене çӳлелле тăратса, совет çарĕсем тăракан вырăна пынă.

Пĕр участокра Лукашевский кĕçĕн лейтенант нимĕçсен туппине тытса илнĕ те çав тупăпах тăшмана пеме тытăннă. Совет офицерĕ виçĕ пулемета тата нимĕçсен пысăк ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Гарипов кĕçĕн лейтенант командир пулса ертсе пыракан взвод хаяр тытăçура 60 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Малюга сержант командир пулса ертсе пыракан стрелковăй взвод кун каçиччен хăйсенчен нумай йышлăрах тăшманăн виçĕ контратакине сирсе янă. Гитлеровецсем вара ним йĕрки-паллисĕр каялла чакнă. Çав çапăçура Малюга сержант 15 нимĕç салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Познань хулипе крепоçĕн тыткăна лекнĕ коменданчĕ Эрнст Меттерн генерал-майор çапла каласа кăтартнă: «Гитлер пире, темĕн чухлĕ халăх пĕтмелле пулсан та, Познань хулипе крепоçне хамăр аллăрах тытма хушмарĕ. Эпĕ радио тăрăх нимĕç çарĕсен «Висла» ятлă группин командующине Гиммлера хула гарнизонĕн лару-тăрăвĕ питĕ пăсăлса кайни çинчен икĕ хут каласа патăм. Икĕ хутĕнче те вăл хулана темĕн чухлĕ вăй пĕтмелле пулсан та хӳтĕлесе тăма хушрĕ. Февралĕн 22-мĕшĕнче эпир радиопа çакăн пек пĕлтертĕмĕр: «Текех тытăнса тăма пултараймастпăр. Вырăссен бомбардировщикĕсем пире пĕр вĕçĕмсĕр атакăлаççĕ. Йывăр артиллери, минометсем, пулеметсем пирĕн позицисене кунĕн-çĕрĕн персе тăраççĕ. Пирĕн çухатусем çав тери пысăк. Хуларан татса тухма приказ пама ыйтатпăр». Çав кунах каçхине Гиммлертан çакăн пек ответ илтĕмĕр: «Темле çухатусем тӳсмелле пулин те, тытăнса тăрăр. Татса тухма хăтланни—пĕр усăсăр япала. Ун çинчен Шнайдемюль лайăх каласа парать. Шнайдемюль гарнизонĕ те татса тухма хăтланса пăхрĕ, анчах та ăна вырăссем пĕтерсе тăкрĕç».

Познань хулипе крепость коменданчĕн штаб начальникĕ Эрвин Тедбери полковник, тыткăна лекнĕскер, çапла каласа кăтартнă: «Гиммлертан телеграмма илнĕ хыççăн эпир хамăр лару-тăру çинчен сӳтсе явма канашлăва пухăнтăмăр. Çав вăхăтра дежурнăй офицер чупса килчĕ те çапла каларĕ: вырăссем Цитаделе çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕç, терĕ. Унтан вăл çапла каларĕ: салтаксем тата офицерсем те çурмăйĕшĕ ушкăнĕ-ушкăнĕпе тыткăна парăнаççĕ, терĕ. Пирĕн пурнăç пĕтсе ларни пурне те уçăмлăнах паллă пулса тăчĕ».

ЗОЯ
Поэма

Эс чаплă Зойăпа пĕр ятлă,
Шăпу та санăн унни пек,
Ĕçӳ те унни пек хăватлă,
Вилме те вилтĕн эс ун пек.

Вăл пулнă аслă вырăс хĕрĕ,
Эс унăн йăмăкĕ—чăваш,
Ун ячĕ ĕмĕр пулĕ чĕрĕ,
Ан сӳнтĕр санăн та, юлташ!

Хĕрпуççăн пулнă вăл пит паттăр,
Вăл ӳснĕ аслă Мускавра,
Сана чăваш çемйи çуратнă,
Эс ӳснĕ ват Шупашкарта.

Мухтавлă пултăр сан яту та,
Çӳретĕр халăх хушшинче,
Хисеплĕ пултăр, пултăр çутă,
Ан тухтăр халăх асĕнчен.

Тăванăм, ху та, тен, сăнанă:
Ӳкет те çăлтăр—йĕр юлать...
Çав çутă йĕр пек пурнăç санăн,
Кĕске пулин те—ялтăрать.

Вунсаккăрта кăначчĕ эсĕ,
Шкултан та тухнăччĕ кăна.
Сан усă куллуна илтмесĕр
Эп ирттерместĕнччĕ куна.

Эс кӳршĕре кăна пурнаттăн.
Кĕреттĕн пĕчĕкçĕ сурта.
Сана ирпе час-час кураттăм
Шап-шур çеçкеллĕ сатăрта.

Эс ху та пурă çĕмĕрт пекчĕ,
Пилеш пек çирĕп, яштака,
Эс ху та сат пек çеçкереччĕ,
Чипер те капăр, тăпăлкка.

Паян куна асран каймаççĕ
Таса та тăрă куçусем,
Ик çутă çăлтăр пек çунаççĕ.
Паян та ăшă пек вĕсем.

Паян куна та асăмрах-ха:
Ирхи салам Сире!—тени,
Асрах такам валли вĕраххăн
Пĕр çыхă шур чечек татни.

Эс хĕрлине чикеттĕн хутăн,
Хитре-и?—теттĕнччĕ вара.
Мĕн чухлĕ ĕмĕт, шанчăк, шухăш
Вĕрет вунсаккăрти пуçра!

Сисеттĕм: эсĕ юрататтăн,
Сывлаттăн ĕнтĕ хăшлатса,
Вăтанипе пуçна усаттăн
Пĕр хĕрелсе, пĕр шуралса.

Эппин телейлĕ пулăр, теттĕм,
Эпир те савнă ĕлĕкрех.
Пиччу пек саншăн хĕпĕртеттĕм,
Пурăнтарасшăнччĕ шепрех.

Пулмарĕ.:. Вăрçă сиксе тухрĕ
Пĕр мур ефейтора пула.
Çырма пек юхрĕ, чĕр юн юхрĕ,
Çĕрпе танлашрĕ çĕр хула.

Ыйтмарăн эсĕ аннӳтен те—
Эс утрăн комиссар патне.
Ăна шур хут пырса сĕнен те—
Эп хатĕр, тетĕн, çул çине.

Шăпланчĕ сан хавас куллу та,
Кăра тĕс çапрĕ çут сăнна,
Вăйланчĕ сан çемçе утту та,
Хытартăн çепĕç кăмăлна.

Эс мантăн пулĕ йĕкĕтне те,—
Çĕршыв! тени тытать чунна.

Каларăн пулĕ: ĕлкĕретĕп,
Халь вăрçă йыхăрать мана.

Тен, эс юлма пултарнă пулĕ,
Тен, вăрçă—хĕрĕн ĕçĕ мар!..
Тен, юхмĕччĕ аннӳн куççулĕ,
Куççуль вĕт сивĕ шăрçа мар?!.

Асна пĕр шухăш-туртăм çĕннĕ:
Тăван çĕршыв, Çулпуç, Мускав.
Арçын-и, хĕр-и... лозунг чĕннĕ:
«Совет çынни, вăрçа хускал!»

Килне килсен: каятăп, терĕн,
Пулмасть кучух килте ларса..,
Аннӳ салхуллăн тирпейлерĕ,
Асатрĕ ăшшăн макăрса.

Салхуллăн юлчĕ симĕс сат та,
Пушанчĕ пӳлĕм тусĕнчен.
Роман выртать вĕçне тухман та,
Çыру... çырса та пĕтермен.

Васкарĕ поезд хăвăрт-хăвăрт,
Çĕрпӳ. Канаш хыçа юлать...
Васкарĕ поезд шăкăрт-шăкăрт,
Çĕршыв столицине каять.

Çурхи шывсем хускалнă тейĕн:
Васкать Мускав, шавлать, кĕрлет.
Çар тумĕпе—çĕршыв телейĕ,
Вăрман пек шутсăр çар иртет.

Вăрçа, вăрçа каясшăн эсĕ,
Анчах каларĕçĕ: тăхтан,
Усси пулаймĕ вĕренмесĕр,
Радистка, терĕç, эс пулан.

Приказ. Унран пăрăнаймастăн.
Итлен. Çарта йĕрки çапла.
Вара эс куç та мăч хупмастăн,
Çӳретĕн эс курса-шкула.

Пилотка тăхăнатăн меллĕн,
Çыхатăн сарлака тăха.
Сăран пушмак, салтак шинелĕ
Юри çĕленĕ пек паха.

Самолета кĕрсе ларатăн,
Çӳл тӳперен çĕре чăман,
Шăхăракан чул пек анатăн,
Самант... парашютна каран.

Шур лĕпĕш пек анса çитетĕн,
Çĕре хаваслăн ыталан,
Инструктор сассине илтетĕн:
«Аван, Семенова, аван!»

Килçе çитет хура ноябрь,
Мускав умне тăшман çитет.
Вăрçа тухмашкăн эсĕ хатĕр,
Хастар та эсĕ, шиклĕ те.

Тăшман тылне анас пулать сан,
Тăшман тĕлне калас пулать:
Эс радио-хыпар парсассăн,
Тăшман çинех ӳкет снаряд.

Чикетĕн пĕчĕк передатчик,
Ларатăн самолет çине.
Вăл йăрткайăк пек хускалчĕ,
Вăл кĕчĕ пĕлĕт хушшине.

Пĕрле пырать вунике каччă,
Пĕрле пырать вунике хĕр.
Кашнин—приказ, кашнин—задача,
Анчах тĕллев—кашнийĕн пĕр:

Кĕпер сывлăшалла хăпартăр,
Аркантăр çӳл, кĕрлетĕр вут,
Пĕрре те çăмăл ан сывлайтăр
Çав нимĕç мурĕ—çав çич ют!

Пилот калать: анмашкăн вăхăт!
Хăрушă. Çил çеç шăхăрать.
Сиксе тăрать те Зоя хăвăрт
Хурчăка пек çĕре чăмать.

Хĕрсем сикеççĕ умлăн-хыçлăн,
Сикеççĕ харсăр йĕкĕтсем.
Çĕрте ютсем кĕтеççĕ выççăн,
Çутăлкалаççĕ ракетсем.

Вăрман хĕрне пуçтарăнаççĕ
Васкавлă парашютистсем,
Пĕрне-пĕри суса тухаççĕ—
Шăп çирĕмниллĕкĕн вĕсем.

Кашнин—приказ, кашнин—задача.!.
Сывпуллашаççĕ те, вара
Хăйсен çулĕпеле утаççĕ...
Хура кĕр касĕ, пит хура.

Хура.:. Ун чатăрне чĕреççĕ
Хастар хĕрсем, яш йĕкĕтсем.
Пуç урлă снарядсем иртеççĕ:
Шарлантарас пирĕннисем.

Пĕтĕрĕнсе çĕре ӳкеççĕ
Фрицсем, ганссем, шульцсем,
штоксем.:.
Сывлăшалла ĕрĕхтереççĕ
Снаряд тиенĕ составсем.

Пуçне хыçать чĕр юлнă нимĕç:
— «Ак тамаша! Ак пĕсмелле!
Ак вырăс те.:. Çитерчĕ çимĕç.:.
Аçтан перет? Тĕлĕнмелле!

Диверсантсем антарчĕç пулĕ?
Хаяр ĕçлеççĕ,çке вĕсем:
Унта—снаряд, кунта ак—пуля...
Тăхтав памаççĕ вĕт, мурсем!»

Ĕçлет ырмасăр передатчик,
Хум хыççăн хум леçет хыпар.
Иртет те вăхăчĕ пăртакçă—
Каллех—кĕрлев, каллех—кăвар...

Ку пирĕн Зойăн, Зойăн ĕçĕ!
Радисткăн ĕçĕ—ĕç тăвать.
Ку пирĕн хĕрĕн, хĕрĕн хĕçĕ
Тăшман пуçне касса çурать.

Çулталăк шăп тылран тухмасăр
Хум хыççăн хум вăл ăсатать,
Юратнă сасă, лайăх сасă
Тăшман çине тăхлан тăкать.

Хастарлă, паттăр, чаплă ĕçшĕн
Мухтавлисен шутне кĕрет.
«Служить тăватăп хамăр çĕршĕн!»
Сăпайлăн çеç вăл ответлет.

Кăкри çинче çутать медалĕ,
Хĕп-хĕрлĕ çăлтăр ялкăшать.
Ик алăра вылять вăй-халĕ,
Вĕр-çĕнĕ юрă чун юрлать.

Кунсем, çĕрсем хуллен шăваççĕ,
Çич ют калле васкав чакать.

Пуç урлă минăсем уласçĕ,
Пуç урлă пуля шăхăрать.

Чиркӳ тăрне хăпарнă Зоя.
Кунтан курнать мĕнпур тавра.
Яла капланнă нимĕç вăйĕ,
Хĕр пĕлтерет: пар тупăран!

Ахăрттарать Совет тупиийĕ,
Хура çĕре тавăрттарать.
Хăпать мур нимĕçĕн сехрийĕ,
Вăл анкă-минкĕ пăхкалать.

Чухларĕ мур, эсрел пăвасшĕ!
Тытса пăхать бинокльтен,
Хыпарлакан хĕре тытасшăн
Салтак ярать пĕр рота, тен.

Пуçланчĕ çапăçу хаяррăн...
Çӳлти—автоматран хĕртет,
Ак тимĕр ăшалать кăварран,
Ак пуля та пĕтсе çитет.

Тумларĕ юн та пăчăр-пăчăр.
Çапах чакмасть-ха вăй-хăват:
Гранат вылярĕ йăлтăр-йăлтăр,
Вăл шăхăрса çеç ыткăнать.

Ун хыççăн шăхăрчĕ теприйĕ,
Унтан татах, татах, татах..:.
Арканчĕ нӳрлĕ çĕр тăприйĕ
Нимĕçсене витсе хурсах.

Самант... чиркӳ тăрри шăпланчĕ.
Ырра-и ку? е усала?
Самант... хум хыççăн хум ăсанчĕ:
«Чиркӳ çине тупăпала!

Патрон та пĕтрĕ ман, гранат та...
Час передатчик та ванать...
Атакăлать мана пĕр рота,
Татах çĕн вăй, ав, пухăнать...

Туссем, сывпулăр! Васкăр, васкăр,
Чиркӳ çине, шăп ман çине!..»
Улать те тупă—ластăр-ластăр
Ишĕлтерет чиркӳ чулне.

Хупланчĕ йытă нимĕç йышĕ...
Йĕрет йĕтре, масар чавать:
Чипер хĕр Зойăмăр вилнишĕн
Çĕр нимĕçе çăва çăтать.

Яла кĕрет тăван çар чаçĕ.
Алтаççĕ шăтăк салтаксем:
Шинельпеле витсе хураççĕ
Радисткăн сив ӳтне вĕсем.

Танксем иртеççĕ чарăнмасăр,
Çарсем утаççĕ—шучĕ çук.
Чăн юлашки фашист кăнмасăр
Вĕсем киле таврăнас çук.

..:Эс чаплă Зойăпа пĕр ятлă,
Шăпу та санăн унни пек,
Ĕçӳ те унни пек хăватлă,
Вилме те вилтĕн эс ун пек.

Вăл пулнă аслă вырăс хĕрĕ,
Эс унăн йăмăкĕ—чăваш,
Ун ячĕ ĕмĕр пулĕ чĕрĕ,
Ан сӳнтĕр санăн та, юлташ!

Хĕрпуççăн пулнă вăл пит паттăр,
Вăл ӳснĕ аслă Мускавра,
Сана чăваш çемйи çуратнă,
Эс ӳснĕ ват Шупашкарта.

Мухтавлă пултăр сан яту та,
Çӳретĕр халăх хушшинче,
Хисеплĕ пултăр, пултăр çутă,
Ан тухтăр халăх асĕнчен!

Стихван ШАВЛЫ.

США конгресĕнче Рузвельт тухса калани

ВАШИНГТОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Рузвельт США конгресĕн икĕ палатин пĕрлехи ларăвĕнче Крымри конференцин итогĕсем çинчен сăмах тухса каланă.

«Крымри конференцирен эпĕ,—тенĕ Рузвельт,—пĕтĕмĕшле мир тумалли çулпа эпир лайăх утса каймăпăр, тесе çирĕп шанса таврăнтăм. Конференцин тĕп тĕллевĕ иккĕ пулнă. Пĕрремĕшĕ—Германие мĕн май килнĕ таран хăвăртрах тата çынсем тĕлĕшĕнчен сахалтарах çухату тӳссе аркатса тăкасси. Ку задача халĕ ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Германи çарĕпе халăхе пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен тата пирĕн союзниксен вăйĕсен ӳссе пыракан хăватне тӳсса тăраççĕ...

Иккĕмĕш тĕллев—пĕтĕм тĕнчери килĕшĕвĕн никĕсне малалла хывса пырасси. Вăрçă йĕркесĕрлĕхĕ хыççăн çав килĕшӳ йĕркепе хăрушсăрлăх туса хурĕ, вăл пĕтĕм тĕнчери çĕршывсенче вăраха пыракан мир тăвассине пăртак шанса тăма май парать. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе те пит пысăк ĕçсем тунă».

«Гитлер пирĕн çинчен—вĕсем пĕр-пĕрине килĕшеймĕç, тесе шухăшланă, пĕр-пĕр пĕчĕк хирĕçӳ союзниксен пĕрлĕхне хавшатма пултарĕ, тесе шутланă. Çавăнпа усă курса, вăл хăй тата унăн тусĕсем — гангстерсем пĕтесрен çăлăнса юлма ĕмĕтленнĕ. Çак тĕлĕшпе унăн пропагандистла машини нумай уйăхсем хушши ĕçленĕ. Анчах Гитлер ĕмĕтлени путланса ларчĕ. Аслă союзниксем вăрçă тĕлĕшпе кăна мар, мир тăвас тĕлĕшпе те нихăçанхинчен те татăкăнрах сыхăнчĕç. Пĕр-пĕрипе тата мире юратакан ытти халăхсемпе çавăн пек пĕрлешсе тăнине вĕсем малалла тăсма шут тытрĕç, çапла вара пĕтĕм тĕнчере вăраха пыракан мир тăвас шухăш пурнăçа кĕрекен шухăш пулса тăчĕ.

Совет Союзĕн, Англин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен штабĕсене ертсе пыракансем кашни кунах пĕр-пĕрипе тĕл пулса калаçнă. Вĕсем тата союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен стратегиллĕ ĕçĕсене пĕр-пĕрипе килĕштерес тĕлĕшпе Сталин маршалпа, Черчилльпе тата манпа час-часах канашланă. Вĕсем Германие тĕпренех тата вăйлăн пырса çапмалли плансене туса хучĕç».

«Çав плансемпе килĕшӳсем,—тенĕ Рузвельт,—çар вăрттăнлăхĕ пулса тăраççĕ, анчах та вĕсем Германие татăклăн аркатас куна çывхартаççĕ. Нацистсем халĕ вăл плансенчен хăшне-пĕрне курма пултарĕç. Вăл ĕнтĕ вĕсен никекĕ пулĕ. Ыран, ырантан тепĕр кунне тата малалли ытти кунсенче те вĕсем ун çинчен ытларах та ытларах пĕлсе тăрĕç. Вĕсене сывлама та вăхăт пулмĕ. Германи пĕр сăмахсăр парăниччен эпир хамăр вăйа ӳстерсех пырăпăр».

Крымри конференцире вăрçă пирки килĕшнĕ пекех,—тенĕ Рузвельт,—пĕтĕмĕшле çирĕп мире сыхлемалли пĕтĕм тĕнчери организаци пирки тунă килĕшӳсем те çавăн пекех паллă вырăнта тăраççĕ.

Рузвельт каланă тăрăх, Крымри конференцире ирĕке кăларнă районсем пирки туса тăракан ыйтусене пурне те пĕр шухăшлă пулса татса панă.

«Ирĕке кăларнă районсем тĕлĕшпе висĕ союзник пĕр шухăшлă пулса решени йышăннин тĕслĕхĕ,—тенĕ малалла Рузвельт,—Польша пирки килĕшӳ туни пулса тăрать. Польша ыйтăвĕ вăл вăрçă хыççăнхи Европăра лăпкăлăха пĕтерме пултаракан ыйту пулса тăнă. Эпир конференцие çав ыйтăва татса парас шухăшпа пытăмăр. Вăл ыйтăва татса пама пултартăмăр та ĕнтĕ... Польша пирки тунă килĕшӳ хальхи условисенче никама пăхăнмасăр ирĕклĕн аталанса пыракан Польша государствишĕн чи лайăх килĕшӳ пулса тăрать».

«Крымри конференци,—тенĕ Рузвельт,—вăрçăн тĕп йывăрлăхне тӳсекен висĕ тĕп державăн канашлăвĕ пулнă. Çакăн пирки те вăл конференцире Франци хутшăнса ĕçлемен, анчах апла пулин те, пулас Европăра тата пĕтĕм тĕнчере Франци тивĕçлĕ вырăн памаççĕ тесе никам та калама пултараймасть».

«Крымри конференци, паллах ĕнтĕ,—тенĕ Рузвельт,—Европăри вăрçă ыйтăвĕсемпе тата Европăна тивĕçекен политикăллă ыйтусемпе кăна интересленнĕ. Вăл Лăпкă океан тавралăхĕнчи вăрçă ыйтăвĕсене сӳтсе явман. Çавах та Мальта утравĕ çинче пирĕн Англипе Америка штабĕсен начальникĕсен пĕрлешнĕ ушкăнĕ Японие хирĕç тăвакан атакăсене вăйлатас тĕлĕшпе хăйсен планĕсене тунă».

«Ертсе пыракан висĕ çĕршыв мир тума пĕтĕмĕшле никĕс тупас тĕлĕшпе Крымри конференцире ăнăçлă ĕçленĕ. Çак конференци,—тенĕ юлашкинчен Рузвельт,—пĕр-пĕр çĕршыв ытти çĕршывсем тĕлĕшпе хăй çеç активлă ĕçлес система, уйрăм союзсем тăвас система, пĕр-пĕр çĕршыва урăх çĕршыв пăхса тăмалла тăвас система, вăйсене пĕртан тăвас система тата çавăн пек ытти майсем те пĕтсе ларнине пĕлтерет. Тĕнче темиçе ĕмĕр хушши çавăн пек майсемпе усă курма хăтланнă, анчах та çак ĕç ăнăçлă пулман. Çав система вырăнне эпир пĕтĕмĕшле организаци туса хурасшăн. Вăл организаци çумне кайран мире юратакан пур çĕршывсем те хутшăнма пултарĕç. Конгресс тата Америка халăхĕ конференцин çав результачĕсене ырлассине эпĕ шанса тăратăп. Вăл вара яланхи мирĕн пуçламăшĕ пулĕ, унăн никĕсĕ çинче эпир турă пулăшнипе, лайăх мир туса хурăпăр. Ун чухне вара пирĕн ачасем тата ачасен ачисем—пирĕн тата сирĕн—пĕтĕм этемлĕхĕн ачисемпе вĕсен ачисем пурăнмалла пулĕç».

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Германире союзниксен çарĕсем тăшман тухса кайнă хыççăн Калькар хулине йышăннă. Гох хулипе Маас шывĕ хушшинче союзниксем нумай ялсем тытса илнĕ.

Союзниксен çарĕсем Рер шывĕ районĕнче çапăçнă, тăшман хирĕç тăнине сире-сире янă. Кельн хулинчен хĕвеланăçнерехри районра тăшман хирĕç тăрса çапăçасси пăртак вăйланнă. Союзниксем Кельнран 11 километрта тăраççĕ. Эрфт шывĕ çинче тата хуларан хĕвеланăçнерехри канал çинче висĕ укреплени тунă. Эрфт шывĕнчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Эш хулине тăшмантан тасатнă. Дюренран хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Хоххирхен, Гладбах тата Фетвейс хулисене йышăннă.

Рейн облаçĕнче Шлейденран кăнтăртарахра союзниксем Решейд хулине тăшмантан тасатнă. Прюмран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен танковăй чăçĕсем Прюм шывĕ урлă каçнă та халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Битбург хулине тăшмантан тасатнă хыççăн союзниксен çарĕсем Килль шывĕ патне çитнĕ, темиçе хулапа ял тытса илнĕ. Саарпа Мозель шывĕсем çинчи узелсен центрĕ пулса тăракан Вассербиллиг хули союзниксен аллинче. Союзниксен çарĕсен танковăй отрячĕсем Пеллинген хулине пырса кĕнĕ. Февралĕн 27-мĕшĕнче 7.000 çын ытла тыткăна илнĕ.

Вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем Саарбрюккенран хĕвелтухăçнерехри чугун çул кĕперĕсене тапăннă. Мартăн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксем Берлин хулинчи тĕрлĕ объектсене атакăланă.

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Прюм хули районĕнче союзниксен çарĕсем малалла кусса пынă. Прюм хулинчен кăнтăртарахра вĕсем хăйсен Прюм шывĕ çинчи укреплениене аслăлатнă. Прюм хулинчен 6,5 километрта пĕр çуллĕ вырăна йышăннă. Союзниксен çарĕсем Керфенхейм хулине пырса кĕнĕ тата Мюнхен-Гладбах хулине йышăннă. Дюренран хĕвелтухăçнерехре союзниксем Неффель шывĕ урлă касса кайнă, 4 ял йышăннă, Виссерхейм хулине кĕрсе кайнă. Рер шывĕн хĕвелтухăç хĕррипе кăнтăр еннелле наступлени туса пыракан союзниксен чăçĕсене хирĕç Нилеггенран кăнтăртарахра, çавăн пекех Эрфт шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре нимĕç çарĕсем вăйлă çапăçаççĕ.

Союзниксем Трир хулине кĕрсе кайнă тата çав хуларан 2 километр çурă çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тĕп шоссене татнă.

Союзниксен авиацийĕ Рейн шывĕн икĕ енче Кельн çывăхĕнчи чугун çул объекчĕсене, çавăн пекех Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехри Кельн районĕнчи çулйĕрсен 8 центрне тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавралăхĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, Италири фронтĕнче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Ĕнер союзниксен 1.400 самолечĕ Австрири, Югославири тата Çурçĕр Италири тăшман объекчĕсене атакăланă.

АМЕРИКАНЕЦСЕН 2.250 САМОЛЕЧĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: мартăн 1-мĕшĕнче кăнтăрла американецсен 1.200 йывăр бомбардировщикĕ ытла Германири Гейльбронн, Брухзаль, Геппинген, Рейтлинген, Неккарсульм, Ульм тата Аугсбург чугун çул центрĕсене бомбăсем пăрахса атакăланă. Американецсен 600 йывăр бомбардировщикĕ ытла Мангейм хулине тата Дортмунд çывăхĕнчи синтетически горючи заводне тапăннă. Америка бомбардировщикĕсене 450 истребитель ытла хӳтĕлесе пынă.

Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин «Москито» йышши самолечĕсем Берлин, Нюрнберг тата Мюнхен хулисем çине бомбăсем пăрахнă.

РУМЫНИРЕ ÇĔНЕ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУСА ХУМА ПЕТР ГРОЗА ДОКТОРА ХУШНА

БУХАРЕСТ, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни королĕ Румынири çĕнĕ правительствăна туса хума нациллĕ-демократиллĕ фронтăн пысăк организацийĕ шутланакан сухаççен союзĕн председательне Петр Гроза доктора хушнă. Кун умĕнхи кабинетра вăл премьер-министрăн заместителĕ пулнă. Çапла вара, Румыни правительствине чăн-чăн демократиллĕ партисен представителĕсенчен туса хурас ыйту, вăраха кайнăскер, таталасси инçе мар ĕнтĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Отечественнăй вăрçăра суккăрланнă инвалидсене Наркомсобес çакăн çинчен пĕлтерет: Чкалов хулинче профшкола-интернат çăматă тăвас ĕçĕн мастерĕсене хатĕрлекен отделение суккăрланнă çар çыннисене илет. Вĕренсе тухнă хыççăн суккăрланнă çар çыннисене инвалидсен кооперацийĕн артелĕсене, колхозсене, совхозсене, вырăнти промышленность предприятийĕсене, промкоопераци артелĕсене тата суккăррисен обществин предприятийĕсене ĕçлеме вырнаçтараççĕ.

Вĕренме каяс текенсен Чăваш АССР Наркомсобесне заявлени памалла, заявленипе пĕрле çав ĕçе вĕренме юрăхлине çинчен ВТЭК панă справкăна ямалла. Вĕренме каякана ăсатакан çын параççĕ тата çул укçи параççĕ.

Заявленисене мартăн 10-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Тĕнчери лару-тăру

Февралĕн 23-мĕшĕнче совет халăхĕ паттăр Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнине уявласа ирттерчĕ. Çав уяв пирки кăларнă приказра Верховный Главнокомандующи çапла каланă: Хĕрлĕ Çар «Совет Союзĕнчи халăхсене фашистла нимĕç чуралăхĕнчен хăтарчĕ, хамăр çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне упраса хăварчĕ. Европăри халăхсене нимĕç пусмăрне сирпĕтсе яма пулăшрĕ». Хĕрлĕ Çар уявĕ, çапла вара, пĕтĕм тĕнчипе паллă уяв пулса тăчĕ.

Пĕтĕм тĕнчипех, союзлă аслă державăсен столицисенчен пуçласа Австралин ниçери кĕтессисене çитиччĕнех, Хĕрлĕ Çар çуралнă куна уявласа ирттернĕ. Фашизма хирĕç кĕрешекен çĕршывсен государство руководителĕсем, общество деятелĕсем тата вĕсен халăхĕсен анлă массисем паттăр Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕпе савăнса ăна тав тунă.

Ирĕклĕхе юратакан халăхсем Хĕрлĕ Çар уявне фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă вăхăтра уявласа ирттерчĕç. Шведсен Терңгрен генералĕ, Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи лару-тăрăва хакласа, нимĕçсемшĕн «вилĕмле хăрушлăх» килсе тухни çинчен каланă. Фашистла пуçлăхсем совет наступленийĕ вăйлăн пынипе хăйсем çав тери хăраса ӳкнине пытарма пултараймаççĕ. Гиммлерăн «Дас Шварце Кор» хаçачĕ, «çакна хирĕç пăйлă мерăсем» йышăнмалли çинчен асăрхаттарса, гитлерла командовани çав мерăсене пурнăçа кĕртме пултараймани çинчен каланă. «Çав ĕçсене тума,—хуйхăрса калать фашистла листок,—вăхăт кирлĕ, çурма ĕçсем çеç тунипе эпир хамăр тĕллевсене пурнăçа кĕртес çук»,—тет. Германин çар машини арканса каяс вăхăт кашни сехетренех çывхарса килет. Вилĕмле хăраса ӳкнĕ Гитлерпа унăн хӳрешкисем халĕ те çухăрашаççĕ-ха. Вĕсем халĕ те хăратма пăхаççĕ-ха. Анчах та вĕсем истори приговорне улăштарма пултараймаççĕ. Англири радиообозреватель Аллан Белл калашле, вĕсем çухăрашниичен «çĕрĕк çĕрулми шăрши перет», вĕсем хăратни «взрывательне кăларса илнĕ мина пек туйăнать».

Хĕрлĕ Çар наступлени туса пынă вăхăтра хĕвеланăçĕнчи пирĕн союзниксем те хăйсен активлăхне ӳстереççĕ. Февралĕн 23-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем «Зигфрид линийĕ» текен тĕреклетнĕ вырăнта тăракан Германи çарĕсене хирĕç наступлени пуçласа янă. Нимĕçсем хăйсен çарĕсен пĕр пайне унтан хĕвелтухăç фронтне куçарни ку наступление лайăх услови туса парать. Хĕвеланăçĕнче пулнă 90 дивизирен халĕ, ют çĕршывсен хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, унта мĕн пурĕ те 20—30 дивизи кăна тăрса юлнă.

Союзниксен наступлени туса пыракан çарĕсем халăх пурăнакан чылай пунктсене, вăл шутра Линних, Юлих, Дюрен, Мюнхен-Гладбах хулисене, тытса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Кельн хулинчен 11 километрта тăраççĕ, тепĕр тĕлте вĕсем Трир хулине пырса кĕнĕ. Англипе Америка авиацийĕ Германи тылĕсене вирлĕн пыра-пыра çапать. Юлашки кунсем хушшинче Берлин çине пит нумай бомба пăрахнă. Союзниксен авиацийĕ Дортмунд, Нюрнберг, Мюнхен тата Германири ытти хуласем çине те бомбăсем пăрахнă.

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал пресс-конференцире çапла калана: çанталăк хальхи пекех тăрас пулсан, «пирĕн куç умĕнче пуçланнă наступлени Германи çарĕсене Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехре аркатса тăкассин пуçламăшĕ пулса тăрать», тенĕ.

* * *

Çак кунсенче пулса иртнĕ чи паллă политикăллă ĕçсенчен пĕри—Крымри конференци решенийĕсене Англири общинăсен палатинче сӳтсе-явни пулать. Çав конференцин результачĕсем пирки каласа, Великобритани премьер-министрĕ Черчилль союзниксен пĕрлĕхĕ ӳснине палăртнă. «Союзниксем,—тенĕ Черчилль, — Крымри конференцие вăрçă тĕлĕшĕнчен те, политика тĕлĕшĕнчен те нихăçанхинчен те çирĕпрех пĕрлешсе пычĕç». Çав пĕрлĕх тăшмана çĕнтерес ĕçре тата мирпе хăрушсăрлăх туса хурас ĕçре питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. «Пĕрле пулнă чухне, — тенĕ Черчилль,—тĕнчене ирĕклĕхпе телей патне тата чечекленсе ӳсесси патне илсе кайма пирĕн вăй çав тери нумай пулать». Хăйĕн сăмахĕнче вăл Крымри конференци татса панă чылай ыйтусем çинчен каланă. Вăрçă хыççăнхи мир тăвас ыйтусем пирки те вăл нумай чарăнса тăнă. Крымри конференцире союзниксем Думбартон-Оксри конференцире калаçса таталма пултарайман ыйтусем тăрăх та калаçса таталнине палăртнă.

Премьер уйрăмах Польша ыйтăвне татса пани çинчен нумай каланă. «Польша ыйтăвĕпе» усă курса союзниксене пĕр-перинпе хирĕçтерме хăтланакансене Черчилль тивĕçлĕ отпор панă. «Хĕвеланăç демократийĕсемпе вырăс халăхĕ хушшинче хирĕçӳ тухса каяс пулсан,—тенĕ вăл,—этемлĕхĕн кунçулĕ питĕ йывăр пулнă пулĕччĕ. Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикке «Керзон линийĕ» тăрăх тăвассине хирĕçлемелле мар. «Хам енчен эпĕ,—тенĕ Черчилль,—вырăссем ыйтни тĕрĕс тесе шутлатăп».

Конференцире сӳтсе-явнă ытти хăшпĕр ыйтусем çинчен каласа, Черчилль Крымри конференцин декларацине ырлакан резолюци йышăнма сĕннĕ. Çавăн пек резолюци йышăннă та вара. Резолюцие (пуринчен ытла Польша ыйтăвĕ тĕлĕшпе) тӳрлетме сĕннине пит нумай сасăпа сирсе пăрахнă. Сӳтсе-явса пĕтернĕ хыççăн общинăсен палати, пĕрсаслă пулса, правительствăна шанни çинчен калакан резолюци йышăннă.

* * *

Румыни правительствин премьер-министрĕ Радеску, «историллĕ» текен партисенчи реакциллĕ çынсен кăмăлне курă, юлашки вăхăтра уççăнах çĕршыври фашистла элементсене хӳтĕлес çул çине тăчĕ.

Нациллĕ-демократиллĕ фронтăн представителĕсем демократиллĕ реформăсем тума тата Румынин государство аппаратне фашистсенчен тасатма ыйтнă. Радеску çак ĕçсене пурнăçа кĕртме чăрмантарнă. Вăл çĕр реформине туса ирттерме килĕшмен. «Ăна туса ирттерме халĕ вăхăт мар», тенĕ вăл. Шултăра помещиксем çĕре уйăрттарасшăн мар пулнине кăмăлласа, Румыни премьер-министрĕ çапла каланă: апла тусан, «çĕре ĕçлесе тума пăрахаççĕ», тенĕ. Офицерсем хушшинчи фашистла шухăшлакан çынсем пулăшнипе Радеску демократие хирĕçле переворот тума, реакциллĕ çар диктатурине туса хума шутланă. Вăл хĕтĕртсе тăракан реакци пур çĕрте те наступлени тума пуçланă. Февралĕн 22-мĕшĕнче фашистсем «Малакс» заводĕнче рабочисене тапăннă та Румынири ĕç конференцийĕн председательне Георги Апостола хырăмран персе амантнă. Прогрессивнăй «Скынтейя» хаçатăн редакторне те тапăннă. Нациллĕ-демократиллĕ фронта хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе чылай хуласенче полицие фашистла отрядсем хатĕрленĕ пулнă. Февралĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Бухарестра реакционерсем, Румынири социал-демократсен партийĕн центральнăй комитечĕн çуртне тапăнса, пăшалсемпе пенĕ.

Нациллĕ-демократиллĕ фронт çав кунах халăх массисене ӳссе пыракан реакцие хирĕç протестлемешкĕн мирлĕ демонстрацие тухма чĕннĕ. Демонстрантсем фашистла лидерсене арестлеме ыйтнă. Демонстрацире пулнисене пур çĕрте те пăшалсемпе тата пулеметсемпе пенĕ. Бухарест, Крайова, Брашев, Каракаль тата ытти хуласенче те юнлă тытăçусем пулса иртнĕ. Халăх массисене пăшалпа пенĕ çынсене наказани парас вырăнне, Радеску вĕсене уççăнах ырланă.

Нациллĕ-демократиллĕ фронт совечĕ февралĕн 25-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре Радеску правительствине вырăнтан тухма хушнă, халăха фашизмпа ун майлисене пĕтерсе лартасшăн кĕрешме чĕннĕ. Çавăн пек ыйтнине пĕтĕм халăх кăмăлланă. Радеску генералăн вырăнтан тухмалла пулнă. Англири «Экономист» журнал Радеску пирки—вăл «сылтăмри шухăшсен центрĕ» пулса тăрать, тесе каланă.

Юлашки пĕлтерӳсем тăрăх, çĕнĕ правительство туса хума король нациллĕ-демократиллĕ фронтăн представительне, министрсен совечĕн председателĕн заместительне П. Грозана хушнă.

Л. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—..., заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—90, ял хуçалăх ... — 5—...

НТ 00036 Типография № 1, Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000